Уяв умĕнхи ҫул ҫӳрев

# «РФ Патшалăх Думинче пулса куртăмăр»

***Республикăри пур хуласемпе районсенчи ветерансен канашĕсен представителĕсем те апрелĕн 20-мĕшĕнче Мускавра пулса курчĕҫ. Ку ҫул ҫӳреве «Ҫав аслă ҫулсем умĕнче пуҫ таяр» акцие хутшăнса Раҫҫей Патшалăх Думин депутачĕсен, «Пĕрлĕхлĕ Раҫҫей» («Единая Россия») фракци членĕсен Павел Семеновпа Константин Косачев пуҫарăвĕпе йĕркеленĕ. Аслă Ҫĕнтерӳ уявĕ умĕнхи ҫак ҫул ҫӳреве пирĕн районтан Орининта пурăнакан Николай Якимович ВАСИЛЬЕВ хутшăнчĕ. Ҫул ҫӳрев епле иртни пирки эпир ăна хăйĕн шухăш-кăмăлне пĕлтерме ыйтрăмăр.***

– Раҫҫей тĕп хули ҫĕнтерӳҫĕсене ҫурхи ăшă кăмăл-туйăмпа кĕтсе илчĕ. Программа пуян та интереслĕ пулчĕ: Патшалăх Думинче, Поклоннăй сăрт ҫинче, Аслă Отечественнăй вăрçă музейĕнче тата ытти паллă вырăнсенче пуласси, Александровски садра паллă мар салтак вил тăпри ҫине чечексем хурасси т. ыт. те.

Патшалăх Думинче пулни ҫинче уйрăммăн чарăнса тăрас килет. Чăваш Республикинчен килнĕ ветерансен канашĕсен представителĕсене Патшалăх Думин халăх хутшăнăвĕсен ĕҫĕсен комитечĕн председателĕ К.И. Косачев, Федераци тата регионсен политикин ĕҫĕсен комитечĕн членĕ П.В. Семенов кĕтсе илчĕҫ.

Пире пурне те пĕр хут усă курмалли пропусксем пачĕҫ. Ҫавра сĕтел хушшинче ветерансен ĕҫĕсен комитечĕн председателĕпе Н.Д. Ковалевпа тата ытти ответлă ҫынсемпе усă калаҫу пулса иртрĕ Николай Дмитриевич Патшалăх Думинче ветерансем тĕлĕшпе мĕнле-мĕнле ĕҫсем туса ирттерни пирки каласа пачĕ. «Ĕҫ ветеранĕ» знакпа ята халĕ мĕншĕн пама пăрахни пирки те чарăнса тăчĕ. Ку функци малашне патшалăх ҫинче мар. «Ĕҫ ветеранĕ» ят парассине республика Президенчĕпе Патшалăх Канашĕ татса параҫҫĕ. Ҫавна пулах йышăннă саккунсемпе килĕшӳллĕн ветерансене ҫăмăллăхсемпе тивĕҫтерсси кирлĕ шайра мар.

Кунпа пĕрлех ҫăмăллăхсемпе усă курма тивĕҫлĕ ҫынсене эмелсемпе тивĕҫтерессинче те йĕрке кирлĕ. Кун пирки те калаçу пулчĕ.

Юлашки вăхăтра ветерансене «Ока» ҫăмăл автомашинăпа тивĕҫтерессии йĕркеллĕ пулса пыманни пирки сăмах хускатрăмăр. Ку ыйтăва татса парассипе ҫывăх вăхăтрах йĕрке тума шантарчĕҫ. Комиссипе пăхса тухса автомашина илме тивĕҫлĕ тесе палăртнă ҫынна май пулмасан укҫан саплаштарасси пирки те ыйту пулчĕ.



Ветерансене пурăнма кирлĕ условисем туса парасси пирки сăмах хускатакансем пулчĕҫ. Вăрçă инваличĕсене ҫурт-йĕрпе чи малтан тивĕҫтермелле.

Патшалăх Думин ларăвне кĕске вăхăтлăха хутшăнтăмăр. Ларăва вăрçă тата ҫар службин ветеранĕсен Чăваш регион организацийĕн председателĕ Н.Г. Морозов ертсе пыратчĕ. Пирĕн делегацие зала чĕнсен вăл депутатсене Чăваш Республикинчи ветерансен ушкăнĕ саламлать тесе пĕлтерчĕ. Ветерансене тăваллăн алă ҫупса кĕтсе илчĕҫ.

Ларусен залĕ ҫавра формăллă. Дума депутачĕсем йышлах марччĕ. Часах кăнтăр апачĕн вăхăчĕ пулмаллаччĕ. Пĕтĕмпе те 70 яхăн депутат кăначчĕ. Ларусене пурте йĕркеллех ҫӳремен пек туйăнчĕ. Сасăланă чух та хăшĕ-пĕри темиҫе депутатшăн сасăлать пулас. Кнопкăсем пусса ҫӳреççĕ, сасăсем хушаççĕ пулмалла. Пĕрмай ларусенче ларса ывăнса ҫитнĕ пек курăнать.

Кăнтăрла иртни 2 сехетре пире кăнтăр апачĕ ҫитерчĕҫ. Хыҫҫăн виҫҫĕмĕш хута анса ҫитрĕмĕр. Унта пире П.В. Семеновпа К.И. Косачев тата тепĕр хĕрарăм, бюджет ыйтăвĕсемпе ĕҫлекенскер, йышăнчĕҫ, тĕрлĕ ыйтусем пирки ăнлантарчĕҫ.

Республикăран пынă ветерансем чылай ыйтусем хускатрĕҫ. Ветерансен пурнăҫ условийĕсене ҫăмăллатмалли мелсем шырасси, ҫавна валли укҫа-тенкĕ тупасси пирки чарăнса тăчĕҫ. Пĕр сăмахпа каласан, калаҫу хĕрӳ иртрĕ.

Ветерансенчен чылайăшĕ вырăнсенчи ветерансенчен наказсемпе ыйтусем илсе килнĕ. Ку ҫырусене вĕсем парса хăварчĕҫ. Эпĕ вара П.В. Семенова Мулкачкассинче асфальт ҫул тума пулăшнăшăн тав сăмахĕ каларăм. Чăннипех вăл хăйĕн сăмахне тытрĕ.

Кайран эпир Поклоннăй сăрт ҫинче Аслă Отечественнăй вăрçăн тĕп музейĕнче пултăмăр. Кунта тĕрлĕ ҫар техникине нумай пухнă. Пирĕннисен те, нимĕҫсен те сахал мар. Тĕрлĕ вырăнсенче пулса Мускав хулипе, посольствăсемпе, «Москинопа», Мускав патшалăх университечĕпе паллашрăмăр, стадионсенче пултăмăр.

Юлашкинчен вара Хусан вокзалĕнчен «Чувашия» поездпа Шупашкара, тăван вырăнсене ҫул тытрăмăр.

Ҫакăн пек ҫул ҫӳрев йĕркеленĕшĕн, ветерансене Мускава кайса килме майсем туса панăшăн РФ Патшалăх Думине, Чăваш Республикинчен суйланă депутатсене, «Пĕрлĕхлĕ Раҫҫей» фракци членĕсене Павел Семеновпа Константин Косачева пысăк тав сăмахĕ калас килет. Май килнипе усă курса вара ветерансене, тыл ĕҫченĕсене, пĕтĕм Муркаш районĕн ҫыннисене ҫитсе килекен Аслă Ҫĕнтерӳ уявĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп, ырлăх-сывлăх та ăнăҫусем сунатăп.

**Сăн ӳкерчĕкре: вăрçă ветеранĕ Н.Я. Васильев.**

Чăваш чĕлхи кунне халалласа

# Пултарулăхпа палăрчĕҫ

Вулакансем астăваççĕ-ха, "Хыпар" хаҫат (10.03.2007) Чăваш чĕлхи кунне халалласа республикăри шкул ачисем хушшинче "Пĕр чĕлхе – пĕр ăс, икĕ чĕлхе – икĕ ăс" конкурс ирттересси ҫинчен пĕлтернĕччĕ. Пĕрремĕш тур тăван чĕлхене пĕлнине кăтартассипе пулчĕ. Унăн ҫĕнтерӳҫисем вара, тĕрлĕ район-хуларан вăтăр ытла ача, апрелĕн 25-мĕшĕнче Шупашкарти Чăваш наци музейне пухăнчĕҫ. Вĕсем Культура министерствин, наци музейĕн, Чăваш наци библиотекин специалисчĕсенчен тăракан сумлă жюри умĕнче таврапĕлӳ енĕпе хăйсен пултарулăхне кăтартрĕҫ.

Ҫĕнтерӳҫи Ҫĕнĕ Шупашкартан пулчĕ, иккĕмĕш вырăна, палăртма кăмăллă, 1 балл кая юлса пирĕн районти Калайкасси шкулĕнчи 10 класра вĕренекен Оля Аксендарова тухрĕ. Виҫҫĕмĕш вырăна та асăннă шкулта вĕренекен тухрĕ, вăл 10 класри Надежда Лебедева.

**Н. ЗАХАРОВА.**

Призывниксен кунĕнчен

# Телейлĕ ҫул сире, яшсем!



Апрелĕн 25-мĕшĕнче районта Призывниксен кунне халалласа уяв мероприятийĕ иртрĕ. Кăҫал вара районти 46 яш салтак атти тăхăнма хатĕрленет. Ирех вĕсем районти ҫар комиссариачĕ умне пуҫтарăнчĕҫ. «Прощание славянки» марш янăрать. Кунта вĕсене Уйкас Янасал чиркĕвĕн пачăшки Иван атте ҫар службине чипер йĕркеллĕ кайса килме пиллерĕ.

Хыҫҫăн уяв мероприятийĕ Йӳҫкасси шкулĕнче малалла тăсăлчĕ. Пулас салтаксем футболла, волейболла выляссипе, ҫар эстафетинче, кире пуканĕ ҫĕклессипе вăй виҫрĕҫ.

Уявăн савăнăҫлă пайĕнче призывниксене район пуҫлăхĕ Ю.А. Иванов, районти ҫар комиссариачĕн призыв уйрăмĕн пуҫлăхĕ А.Ю. Анисимов, Йӳҫкасси ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ С.Н. Иванов, Йӳҫкасси шкул директорĕ Ю.С. Яковлев, Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ Н.А. Александров, Чернобыльти аварие пĕтерме хутшăннă И.М. Шевелев, запасри капитан М.И. Иванов, Чечен Республикинчи ҫапăҫусене хутшăннă Виталий Кузьмин, призывниксен амăшĕсем Л.Д. Петрова тата Г.В. Маноль саламларĕҫ, Тăван ҫĕршыв хӳтĕлевҫин чыслă тивĕҫне ăнăҫлă пурнăҫлама сĕнчĕҫ.

Шкулти хореографи тата вокал ушкăнĕсем пухăннисене хавас юрă-кĕвĕ парнелерĕҫ.

Уяв район пуҫлăхĕ Ю.А. Иванов пулас салтаксене асăнмалăх парнесем панипе вĕҫленчĕ.

**Г. БЫКОВА,**
**район администрацийĕн вĕрентӳ, ҫамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалисчĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Тăван ҫĕршыва хӳтĕлесе пуҫ хунисене асăнса лартнă палăк умĕнче.**

Чернобыльти атом электростанцийĕнче инкек пулнăранпа – 21 ҫул

# Вăхăтсăр ҫĕре кĕнисем ячĕпе



1986 ҫулта Чернобыльти атом электростанцийĕнче пулнă инкек халĕ те пирĕн чĕресенчех. Хăшĕсен асĕнчен нихăҫан та тухас ҫук вăл. Мĕншĕн тесен ку инкеке пĕтерме пирĕн районтан та 41 ҫын хутшăннă. Вĕсенчен 16-шĕ паян пирĕнпе пĕрле ҫук ĕнтĕ, вăхăтсăр ҫĕре кĕнĕ.

Ҫак хурлăх кунне халалланă мероприяти районта апрелĕн 26-мĕшĕнче «Сказка» кафере иртрĕ. Унта Чернобыльти аварие сирме хутшăннисемпе пĕрлех вăхăтсăр ҫĕре кĕнĕ чернобылецсен мăшăрĕсем те пулчĕҫ.

Ку мероприятие ҫавăн пекех район администрацийĕн пуҫлăхĕн ҫумĕ В.Г. Никитин, ЧР Сывлăха сыхлас ĕҫ тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуҫлăхĕ Н.П. Петрова, районти ҫар комиссарĕн ҫумĕ Д.Н. Захаров хутшăнчĕҫ, хăйсен сăмахĕсенче чернобылецсене хăйсен сывлăхĕсене, пурнăҫĕсене шеллемесĕр пысăк инкеке путарма хутшăннăшăн тав сăмахĕ каларĕҫ, вăхăтсăр ҫĕре кĕнисене асăнса пĕр минут шăп тăчĕҫ.

Пултарулăх ушкăнĕ чернобылецсене хавас юрă-кĕвĕ парнелесе кăмăлĕсене ҫĕклерĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: пĕрле пулнă чух калаҫмалли, аса илмелли сахал мар; маттур ҫынсен ячĕпе юрă янăрать.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



Партисен пурнăҫĕнчен

# Кулленхи ыйтусене сӳтсе яврĕҫ

Апрелĕн 25-мĕшĕнче коммунистсен партийĕн районти организацийĕн виҫҫĕмĕш пленумĕ пулса иртрĕ.

Ҫитес вăхăтрах май–июнь уйăхĕсенче вырăнти организацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем иртмелле. Тухса калаҫакансем А.Г. Григорьев, И.Г. Крысин, К.К. Корнилов сĕннипе районта куллен ĕҫлекен штаб йĕркелерĕҫ. Унăн тивĕҫĕ – ҫитес суйлав пирки халăх хушшинче ăнлантару ĕҫне вăйлатасси, коммунистсен ретне ҫирĕплетесси, «Чебоксарская правда», «Советская Россия», «Правда» хаҫатсене сарасси.

Н.Я. Васильев иртнĕ эрнере вăрçă ветеранĕсен ушкăнĕпе РФ Патшалăх Думин депутачĕсем, «Пĕрлĕхлĕ Раҫҫей» («Единая Россия») фракци членĕсем П. Семенов тата К. Косачев йĕркеленипе Мускавра Патшалăх Думинче пулни ҫинчен каласа пани пурне те килĕшрĕ.

**В. ПУЗЫРЕВ.**

Культура

# Юррисем тыткăнлаççĕ-ҫке чуна

***Нумаях пулмасть Шупашкарти трактор тăвакансен Культура керменĕнче кĕмĕл сасăллă Катя Голубева хăйĕн концертне ирттерчĕ, ҫĕр-ҫĕр кураканăн чунне тыткăнларĕ. Ҫапах та куракансенчен ытларахăшĕ Муркаш тăрăхĕнчен пулчĕҫ. Хамăр пултаруллă ентеше ҫавăн пек сума суни, унăн талантне хаклама пĕлни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эпĕ вара, пысăк концерт хыҫҫăнхи Катьăн шухăш-кăмăлне пĕлес тесе, ăна хаҫат редакцине хăнана чĕнтĕм. Вăл ман йыхрава хапăл туса ыйтусем ҫине хуравлама кăмăл турĕ.***

**– Катя, хăвăн тăрăшулăхна кура пысăк концерт ирттертĕн. Ҫавна май яваплă ĕҫ хыҫҫăн мĕнлерех кăмăл-туйăм ҫуралчĕ?**

– Чăнах та концерта кирлĕ шайра ирттерес тесе чылай тăрăшрăм. Пирĕншĕн, сцена ҫине тухакансемшĕн, концерта пахалăхлă йĕркелесе ирттерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ҫавăнпа программăна пуянрах тăвас тесе паллă артистсене те явăҫтартăм. Сцена ҫинче мансăр пуҫне А. Шадриков, Н. Заводскова, Р. Жолтов, С. Владимиров, В. Клементьев, В. Петров артистсем тата "Сувар", "Солнцеклеш" ташă ушкăнĕсем пулчĕҫ.

Манăн чи малтанах концерта ирттерме пулăшнăшăн район администрацийĕн пуҫлăхне, унта вăй хуракансене, ытти яваплă ĕҫченсене, хамăр ҫемьене, тус-юлташсене тав сăмахĕ калас килет. Пĕччен хулă авăнать, теççĕ те халăхра, мана вара вĕсем авăнма памарĕҫ, вăй-хăват парса тăчĕҫ. Ҫавăн пекех пĕр самант чунăма хускатрĕ. Район администрацийĕн пуҫлăхĕ Ю.А. Иванов, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ тата районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов, Муркашсен Шупашкарти ентешлĕхĕн ертӳҫи А.И. Федотов тата ытти яваплă, пысăк шайри ĕҫченсем сцена ҫине тухса ăшă сăмахсем каласа пысăк чечек ҫыххисем парнелени яланлăхах асра юлĕ, тав вĕсене пурне те.

**– Эпĕ сана сцена ҫинче пĕрре мар курнă. Эсĕ тăхăннă костюмсем вара ыттисенчен илемлĕрех курăнаççĕ. Костюмсен пахалăхлă та пуян коллекцине тытса тăрасси мĕн хака ларать-ши?**

– Эпĕ ача чухнех юрлама та, сцена ҫинче юрлакана та юратнă. Паллах, ҫакă атте-анне юрă тĕнчине питĕ ҫывăх пулнăран килет пулĕ. Сцена ҫинчи юрăҫа, шăратакан юрăна вара илемлĕ костюм татах та илемлетет. Ҫавăнпа та эпĕ костюмсене ҫĕнетсех тăма тăрăшатăп. Кунта вара мана тӳрремĕнех пулăшаканĕ Настя аппа пулса тăрать. Вăл ҫĕвĕҫ пулнă май, нумай ҫĕлет. Сăмах май палăртса хăварам. Настя мана валли кăна мар, анне валли те, ыттисем валли те чылай ҫĕлет. Манăн вара чи малтанах аннене пысăк тав сăмахĕ калас килет. Мĕн пур лайăххи йăлтах унран килет: ҫемьери туслăх, хисеп, ăсталăх тата ытти те. Ҫавăнпа та ăна Турри сывлăх патăрччĕ, вăл пулсан – эпир телейлĕ.



**– Юрă тĕнчине туртăнни хăҫан пуҫланнă тата мĕнле пусăм ҫине улăхтарнă?**

– Ҫӳлерех асăнтăм ĕнтĕ, йăлтах – аннерен. Вăл тăрăшнипех шкулта вĕреннĕ ҫулсенчех сценăна хăнăхса пытăм. Шкул саккипе сыв пуллашсан Шупашкарти Ф. Павлов ячĕллĕ музыка училищинчи вокал уйрăмĕнчен вĕренсе тухрăм.

Ас тăватăп-ха "Кайри – мала" хит-парада хутшăннă май тăтăшах куракансем, итлекенсем хăйсен шухăш-кăмăлне пĕлтеретчĕҫ. Ҫакă вара мана, ҫамрăк юрăҫа, татах та хавхалантарчĕ. Эпир вĕт-ха куракансемшĕн шăрантаратпăр хамăр юрăсене. Куракансем хапăл туни вара «ҫунат хуштарать» пире.

Кашни ҫын хăй кăмăлланă профессие суйласа илет. Манăн та ачаранах ĕмĕтленни пурнăҫланчĕ темелле. Эпĕ юратнă ĕҫ мана чылай-чылай хуласемпе республикăсене илсе ҫитерчĕ. Камчаткăра, Хусанта, Анат Камăра тата ытти ҫĕрте пулма тӳр килчĕ. Тăтăшах гастрольсем, сцена йыхравлать мана. Ытларах чухне эпĕ С. Владимиров, А. Шадриков, С. Павлов артистсемпе ĕҫлетĕп.

**– Кĕҫех Акатуйсем пуҫланĕҫ, апла пулсан Шупашкара каймасăрах, Муркаш тăрăхĕнчех санăн сассупа киленме пултарăпăр.**

– Эпĕ Муркаш хĕрĕ пулнă май, хамăр ентешсем, ял ĕҫченĕсем умĕнче юрлама татах та савăкрах. Атте-аннепе Акатуй уявĕсенче вара сахал мар юрланă. Халĕ Мускав хулинче "Н. Щорс" теплоход ҫинче ĕҫленĕ май, ҫуллахи вăхăтра Муркаш тăрăхĕнче пулаймастăп.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаҫнă.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Катя Голубева.**